440. Вăрмана вутă турттармаççĕ, çăла шыв йамаççĕ.

441. Вăрçă ҫарăнсан, паттăр нумай, теççĕ

412. Не истопив печку хлеба не испечешь; без привычки к труду не наживешь дома. М.

413. Кто обжегся огнем, тот и золу берет варежкой. М.

414. У огня руки долги. М.

415. У огня руки долги, если он вырвется, его уж не поймаешь. М.

416. Дрова не могут гореть не сгорая. М.

417. Не нападай на того, против кого не достанет силы. М.

418. Того, против кого не достает силы, грызи зубами. М.

419. Не поднимай сверх силы. М.

420. Из игры выходит бык. (см. 364)

421. Бык роет, роет, да давай на себя кидать (швырять).

422. Хозяину быка не достается его голова.

423. Он еще из-под дедушкиных ворот не вылез!

424. Да ведь он русский!

425. Десять раз отмерь, один раз отрежь. М.

426. Лучше воруй, чем поймать вора. М.

427. От воровства полы и рукава не сделаются длиннее.

428. Вор—высокий, физиономия у него широкая. М.

429. На воре шапка горит.

430. Вор бывает высок, глаза у него вытаращенные, в талии он тонок. М.

431. Если тебя поймают вместе с вором, не думай, что ты спасешься (отвертишься). М.

432. То же.

433. Воровством не разживешься.

434. У вора кривые руки.

435. У вора ложь так и лезет наружу. М.

436. Лес с ушами, поле с глазами.

437. Из лесу никогда не вернешься с пустыми руками. М.

438. Если пойдешь в лес, то уж непременно услышишь птичьи голоса.

493. Не нашел в лесу прута, чтобы побить жену.

440. В лес дров не возят, в ключ (родник) воды не наливают. М.

441. После войны богатырей (храбрецов) много. М.

442. Вăрçă хушшине ырă кĕмес.
443. Вăтанман вĕрӳçĕ, ӳркенмен йумăçă пулнă, теççĕ.
444. Вăтанман йумăç пулнă, тет, ӳркенмен ăста пулнă, тет.
445. Вăтанман йумăç пулнă, тет, ӳркенмен платник пулнă, тет.

446. Вăтгине хутмасăрах пашалуна ан пĕçер, теççĕ.
447. Вăхăтăр йапалана çиҫĕ çул сыхланă, теççĕ.
448. Вăхăт иртсен, хăмла-çырлине ан кай.
449. Вĕлле хурҫĕ пĕҫҫен нумайах пыл тăваймĕ, теççĕ.
450. Вĕре пĕлмен йытă йала кашкăр кӳнĕ, теççĕ.
451. Вĕренменни тĕттĕм, вĕреннi çутă, теççĕ.
452. Вĕреннĕ çынна вĕренмен çын вĕрентес çук теççĕ.
453. Вĕçен тăрнана пама ан пул, аллăна[1]) кĕсйе тыттар, теççĕ.

442. В брани добра не бывает. М.
443. Бестыжий берется за знахарство, неленивый за ворожбу.
444. Бесстыжий берется за ворожбу, ретивый—за мастерство.
445. Бесстыжий берется за ворожбу, ретивый (не ленивый)—за плотничье мастерство.
446. Не истопив печки, лепешку не пеки. М.
447. Вещь, которой еще не пришел срок, караулил (поджидал) семь лет.
448. После времени за малиной не ходи.
449. Одна пчелка не принесет много меду.
450. Неумело лающая собака приведет в деревню волка. М.
451. Ученье--свет, неученье--тьма М.

452. Неученый не научит ученого. М.

453. Не сули журавля в небе, дай синицу в руки М.

К.

454. Кайалла-майалла[2]) шухăшласан, вилĕ-ҫĕр куçа курăннă.

455. Кайри мала, теççĕ.

556. Кайассинҫен ҫĕнни паха, теççĕ.
457. Кайма ӳркенмен пырас тăрантарнă.
458. Калас ҫĕлхе ан пултăр, утас утăм ан йултăр.

459. Калаçа пĕлмен ҫĕлхерен сысатăран кут ирттернĕ, тет.
460. Калаçа тăран ҫĕлхерен тула туха тăран кут иртерĕ, тет.
461. Калаçассине сахал калаç, ĕçлессине нумайрах ĕçле, теççĕ.
462. Калаçмасăр сумах[1]) тухмасть, каскаламасăр турпас тухмасть.

463. Калаçсан — сăмах, кассан — турпас,
464. Кам кулаҫ çийес тет, кăмака çинҫе выртмасть, теççĕ.
465. Капан айĕнҫе шăши вилмеç, теççĕ.

454. Если будешь слишком много размышлять, то будут покойники мерещиться
455. Последний пусть будет первым М.
456 Приглашение дороже поездки. М.
457. Кто не поленился итти, тот был сыт. М.
458. Пусть больше не будет никаких разговоров, и пусть не останется ни одного шага, который было бы надо шагнуть
459. Перев. см. в Опыте ислед. чув. синт. I, 447.
460. То же.

461. Говорить—меньше говори, работать—больше работай. М.
462. Не будешь говорить, не будет слов; не будешь плотничать, не будет щепок М.
463. Если говорить, получается слово; если рубить, получается щепка. М.
464. Кто хочет есть калач, тот не станет лежать на печи. М.
465. Под скирдом мышь не умирает (—копны не боится). М.

---

[1]) Надо «аллăма»?
[2]) Вар.: «Кайалла-вайалла» дер. Мун'ялы Ядр. у.
[1]) У козм. чув.—сомах.

466. Капăр пулас тесе ан шухăшла, ăслă пулас тесе шухăшла, теççĕ.

467. Каскаламасăр çĕçĕ аври та пулмасăр, теççĕ.

468. Касна çăкăр татăкне тепĕр хут сипĕçтерес çук, тиççĕ.

469. Каскăн ĕненне турă майрака ӳстермен, тет.

470. Касна çăкăр ҫĕллине калла сыпăçтармалла мар.

471. Каç пулсан, каçан сикет, теççĕ.

472. Каçхи сăмах çине ҫăхă сăхаҫ, теççĕ.

473. Каçхи сăмаха ҫăх сысаҫ, теççĕ.

474. Каçхи сăмах çине хура ҫăх сăхат, теççĕ.

475. Каçхи сăмах çине ҫăх сысат.

476. Каçхи ĕç ир кулли, теççĕ.

477. Каçхи ĕçрен кулă тухаҫ.

478. Каçхи ĕç кайала пулаҫ.

479. Катаҫҫи йарнас килет те, сунаска туртас пулаҫ.

480. Катăк нухрат çĕрте выртмасăр, теççĕ.

481. Каҫака купăста касма ăста, сысна паранкă кăларма ăста, кушак хуран тасалама ăста.

482. Каҫаканăн сухалĕ вăрăм та, ăсĕ сахал, теççĕ.

483. Кашкăр та мăнтăр пулĕн-ҫҫĕ, сурăх та ҫилай пулĕн-ҫҫĕ, теççĕ.

484. Кашкăр пулăшсан, вăрăм туна та лашана ӳкерĕ, теççĕ.

485. Кашкăра ури тăрантараҫ, тет.

486. Кашкăра тем ҫулҫҫен тăрантарсан та, вăрманах пăхат, теççĕ.

487. Кашкăрне тытман, тирне сутнă.

488. Кашкăртан тарнă, упана çулăхнă, теççĕ.

489. Кашкăртан хăрасан, вăрмана та кайаймăн.

490. Кашкăртан хăрас пур, вăрмана та кайас[1]) мар, теççĕ.

491. Кашкăртан йытă пулас çук.

492. Кашкăртан çăлăнса, упа айне пулнă, теççĕ.

493. Кашкăрăн ури тăрантат, теççĕ.

494. Кивĕ çынтан çĕнĕ çын тума хĕн, вилнĕ çынна çăва çинҫен кайала тавăрмаççĕ.

466. Не думай о том, чтобы быть нарядным, а думай о том, чтобы быть умным.

467. Не рубив, не сделаешь и черенка ножа. М.

468. Отрезанный кусок хлеба снова не приставишь. М.

469. Бодливой корове бог рог не дает.

470. Отрезанный ломоть снова не приставишь. М.

471. Когда наступит вечер, чувствуется подергивание в спине (?)

472. Вечернее слово (решение) курица расклюет.

473. На вечернее слово курица испражняется.

474. Решение, принятое вечером, расклюет черная курица.

475. Тоже, что 473.

476. Вечерняя работа смех для утра.

477. Вечерняя работа утром вызывает смех. М.

478. Вечерняя работа не спорится. М.

479. Хочется кататься, да надо саночки возить.

480. Обломана серебряная монетка не долго проваляется (не поднятой).

481. Коза—мастерица капусту рубить, свинья—рыть картофель, кошка—чистить котел. М.

482. У козы борода длинная, но ум короток. М.

483. Был бы и волк жирен и овец порядочное число. М.

484. Если поможет волк, и комар одолеет лошадь. М.

485. Волка кормят ноги. М.

486. Волка сколько ни корми, он все в лес смотрит. М.

487. Не поймав волка, продал его шкуру. М

488. От волка убежал, на медведя наскочил. М.

489. Волков бояться в лес не ходить. М.

490. То же.

491. Из волка не выйдет собаки. М.

492. От волка спасся, а попал под медведя. М.

493. Волка ноги кормят.

494. Трудно сделать из старого человека нового; мертвых с кладбища не ворочают. М.

---

[1])=*Вар.*: «кайас пулмаҫ».

495. Кивĕ çула пăрахса, çĕнĕ çул тума каламан, теççĕ.

496. Кивçен хушшине шыв кĕмес, теççĕ.

497. Киле-çурта пĕр тĕпеклĕ [1]) ӳлĕ йупа кирлĕ, теççĕ; ӳлĕ йупа пулмасан, килçурт саланат, теççĕ.

498. Килте йытă пăтратман, йала тухсан, йытă пăтратнă, теççĕ.

499. Килте йытă пăтратма пĕлмен, йалта йăшка пеçерме пĕлнĕ.

500. Килте йытă пăтратман йалта йăшка пĕçернĕ теççĕ.

501. Килте йытă пăтратма пĕлменскер, йал çине тухсан, йăшка пĕçерме тытăннă, теççĕ.

502. Килте йытта йурманне йалта йăшка пĕçернĕ, тет.

503. Килте тиркĕ-ӳăшкă шалтăртатмасăр пулмасть.

504. Килте орай шăлиман [2]) йалта йăшка пĕçернĕ, тет.

505. Килти сутă Мускав сутти, теççĕ.

506. Кимĕ йаракан хуçа та саланать, теççĕ.

507. Кирак [3]) хăш пӳрнене кассан та, ыратать.

508. Кирек те хăш пӳрнене çыртсан та, ыратмасăр çук, теççĕ.

509. Кирек хăш пӳрнене çыртсан та, ыратать.

510. Кирек мĕнле ĕç те ăстаран хăрать.

511. Кирлĕ мар катăк пуртă та ĕмĕрте кирлĕ пулнă, теççĕ.

512. Кирлĕ мар ӳхне йăпала нумай, теççĕ.

513. Кирлĕ ӳхне йăпала тупăнмасть, теççĕ.

514. Кисипĕн икĕ вĕçĕ те шĕвĕр, теççĕ.

515 Кулакана кутне çыпăçать, тет.

516. Кулаканăн кутне çыпçăнат, теççĕ.

517. Кулаӳă çийес тесессĕн, кăмака çинӳе выртма йурамаст.

518. Кулă пите çипăçать, теççĕ.

519. Кунне кун çук, киревсĕре вилĕм çук, теççĕ.

---

[1]) = Может быть: «тӳпеклĕ»?
[2]) = Шăлайман.
[3]) = Кирек.

495. Не велено прокладывать новую дорогу, оставив старую. М.

496. Промеж долга (займа) и вода не просочится (т.-е. долг—вещь священная?)

497. Для дома нужен столб с ? ; если столба не будет, то дом разорится.

498. Дома не месил собакам, а в деревне замесил.

499. Иной дома не мог замесить собакам, а в деревне (в людях) сумел сварить кушанье (похлебку). М.

500. Дома не месил собакам, а в людях сварил похлебку.

501. Иной дома неумеющий приготовить болтушки для собак, в людях принимался готовить кушанье. М.

502. Дома не месил собакам, а в деревне сварил покхебку.

503. В доме не обходится без стука посуды.

504. Иной дома не мог подмести пола, а в деревне (в людях) сготовил кушанье. М.

505. Домашняя продажа—что московская продажа (продать хлеб дома выгоднее, чем вести его на сторону).

506. Разоряется даже купец, владеющий баржами. М.

507. Который палец ни обрежь, всё больно.

508. Который палец ни укуси, всё больно.

509. Болит каждый палец, если его укусишь. М.

510. Всякое дело мастера боится. М.

511. Когда-нибуь и обломленный топор может пригодиться.

512. Когда не надо, тогда много (а когда надо—нет).

513. Когда нужно, тогда не находишь.

514. У песта оба конца острые. М.

515. Кто смеется, тому к заднице говорят, пристает (игра слов).

516. Кто смеется, тому к заднице пристанет. М.

517. Если хочешь есть калачи, не годится лежать на печи.

518. Смех пристает к лицу. М.

519. Смирному нет житья, негодяю нет смерти.

520. Куннĕн кун çук, киревсĕрĕн вилĕм çук, теççĕ.
521. Кунĕ йытă патне туйасăр ан пыр, теççĕ.
522. Кунта хурлăх кураҫҫĕн, луҫҫĕ вилес, теççĕ.
523. Куракан куртăр, курманни ан куртăр, теççĕ.
534. Куракан çулпа çӳрет, курманни кăмака çинҫе выртаť, теççĕ.

525. Курнинҫен курманни, теççĕ.

526. Курнинҫен курманни лайăх: курмасан—пĕр сăмах, курсан—çĕр самах.

527. Курман-илтмен — пĕр сăмах, курнă-илтнĕ—çĕр сăмах.
528. Курман-илтмен кăмака çинҫе выртнă, куракан-илтекен Мускава çитнĕ.

529. Курман çĕртен курнă çын кăнтăрла çурта çутат, теççĕ.
530. Курман кăнтăрла çурта çутнă, теççĕ.
531. Курман ҫипере ан ил, кура тăран усалах ил, теççĕ.

532. Кураканăн сысас килет, курманнин курас килет.

533. Курманнин курасси килет, курнин сысасси килет, теççĕ.

534. Курнинҫен курайманни нумай, теççĕ.
535. Курмасăр курнă, кăнтăрла çурта çутнă теççĕ.
536. Курайманăн куç шăтнă, тӳсеймĕнĕн тӳш шăтнă, теççĕ.

537. Коç хăраť, ал тăваť, теççĕ.
538. Куç хăраť, ал тăваť.
539. Куç хăраť те, ал тăваť, теççĕ.
540. Куç валлі пур та, ал валлі çук, теççĕ.

520. То же.

521. К смирной собаке не подходи без палки.
522. Лучше умереть, чем терпеть здесь обиды. М.
523. Кто видит, тот пусть видит; кто не видит, тот пусть не видит. М.
524. Кто видит, тот ходит (ездит) по дороге; а кто не видит, тот лежит на печи. [1]) М.
525. Не видеть лучше, чем видеть [2]). М.
526. Лучше всего не видеть: если не видел—одно слово; если видел—сто слов [3]). М.
527. Не видел, не слышал—одно слово; видел, слышал—сто слов [4]). М.
528. Кто не видит и не слышит, тот на печи пролежит, кто видит и слышит, тот до Москвы доберется [5]) М.
529. Тот, кто не был зрячим, а потом стал видеть, днем свечку зажигает [6]).
530. Не видящий зажег свечку днем [1]). М.
531. Не бери красавицу, которой ты никогда не видал, а бери дурнушку, но которая постоянно у тебя на глазах.
532. Кто видел, тому хочется нагадить (на это), а кто не видел, тому хочется видеть.
533. Кто не видел, тому хочется видеть; кто видел, тому хочется нагадить (на виденное). М.
534. Не виденного больше, виденного. М.
535. См. 529.

536. У того, кто ненавидит, лопнул глаз; у того, кто не сносит (не переносит, не терпит) провалилась грудь (?)[7])
537. Глаза боятся, а руки делают. М.
538. Глаза боятся, а руки делают. М.
539. Глаза видят, а руки делают.
540. Для глаз есть, а для рук нет.

---

[1]) Намек на выгоду быть свидетелем?

[2]) Тот же намек, что и в пред. пословице?

[3]) Тот же смысл, что и в пред. посл?

[4]) См. пред. посл.

[5]) Тот же смысл, что и пред?

[6]) Послов. О человеке, который вдруг разбогател и стал делать чрезмерные расходы. См. Оп. чув. синт. I, 415.

[1]) См. пред. посл.

[7]) У Паасонена тӳш шăмми—клюшица.

541. Куç та инҫетрен курат, ăс тата ытларах курат, теççĕ.
542. Куçупа ан суйла, хăлхупа суйла теççĕ.
543. Куç кураҫ те, алă çитеймасҫ.

544. Куç умĕнҫе ан мухта, кут хыçĕнҫе ан хурла.
545 Куç-пуç витĕр мар çын турра курнă, тет.
546. Куçа хирĕç куç, ҫĕлхене хирĕç ҫĕлхе, теççĕ.
547 Куçпа курсан, урапа тар.

548. Куçпа пăхсан: кăна тăвăп, тесе калама çăмăл та, тума тытăнсан, тăвимастăн, теççĕ.
549. Куççăр çын хăй умăнҫи ҫашки çинҫе те çулне тупаймасҫ, теççĕ.
550. Куг айĕнҫи лашана аллă çул шыранă, теççĕ.
551. Кутпа сыснине пуçпа пуççапма хушман.
552. Кутăна кутăн пуçлăхĕ, найана найан пуçлăхĕ кутран вунікĕ вĕçлĕ нухайккине çаптарат, теççĕ.

553. Кушака упа тума çук, теççĕ.
554. Кушака çĕнсе, шăрши [1]) айне пулнă теççĕ.
555. Кушак сĕт кураҫ те, анҫах тути вăрăм мар.
556. Кушака кулă, шăшийе [2]) вилĕм, теççĕ.
557. Куштан кутне кушак ҫават, теççĕ.
558. Куштан çăварĕ пысăк пулаҫ.
559. Кӳршĕ-аршă лайăххи килти çемйепе пĕрех, тет.
560. Кăвакал кӳлне кура ҫăмат.
561. Кăвакал кӳллине кура ҫăмаҫ, теççĕ.
562. Кăлуххой попшăн икĕ хут ҫан çапмаҫҫ, теççĕ.
563. Кăмака çинҫе выртсассăн, кулаҫ памаççĕ.
564. Кăмăл турăм—пĕр турăм, теççĕ.

565. Кăмăла пысăк тытсассăн, кăмăла çил те хуса çитес çук.
566. Кăнтăрла хĕвел пăхат, çĕрле уйăх тухат.
567. Кăткă пысăк мар та, çавах тăвайкки ҫакалат.

[1])=Шăши.
[2]) Вар.: «шăршине».

541. И глаз видит далеко, но ум видит еще больше. М.
542. Не выбирай глазами, а выбирай ушами. М.
543. Глаза видят, но руки недостают. М.
544. В глаза не хвали, за глазами не поноси. М.
545. Подслеповатый человек увидел бога.
546. Око за око, язык за язык. М.

547. Увидишь глазами—беги ногами. М.
548. Легко посмотреть и сказать: «Сделаю»; примешься делать—не выходит. М.
549. Слепой не может найти дороги даже в чашке, которая перед ним. М.
550. Проискал пятьдесят лет ту самую лошадь, на которой сидел сам.
551. Своему высерку кланяться не велено. М.
552. Упрямого начальник упрямцев, ленивого начальник лентяев—порет по заднице нагайкой о двенадцати концах. М.
553. Кошку не сделаешь медведем.
554. Одолевши кошку, был побежден мышью.
555. Видит кошка молоко, но только губы коротки (рыло коротко). М.
556 Кошке—смех, мышке--смерть. М.

557. Задницу коштана расцарапает кошка.
558. У коштана рот большой.
559. Хорошие соседи (все равно), что родная семья. М.
560. Утка ныряет смотря по озеру. М.
561. Тоже.

562. Для глухого попа два раза не звонят. М.
563. Если лежать на печи, калача не дадут. М.
564. Только первый кусок с'едается с охотой [1]).
565. Если человек возгордится, то и ветер не догонит его гордыни.
566. Днем смотрит солнышко, ночью восходит месяц. М.
567. Муравей не велик, но все-таки роет склон горы. М.

[1]) Можно понимать и так: кусок, предложенный от души, есть единственный в своем роде (т. е. дороже и ценнее всех). Редакция.

568. Кăтра çӳçлĕ çынна йăс турасăр уçас çук, теççĕ.

569. Кăҫкăран пулăшши çук, теççĕ.

570. Кăшăлсăр пиҫке курăймăн, теççĕ.

571. Кăшман йӳçĕш çарăкра, теççĕ.

572. Кĕлет уççине пăрмасăр уçăлмасть.

573. Кĕнеке пурне те пĕлет.

574. Кĕрхи турăха кĕрӳшĕнҫен хĕрхеннĕ.

575. Кĕҫĕн пуçне ҫарман, мăн пуç кайнă.

576. Кĕҫĕн пуçа ҫарайман, аслă пуçа хĕн килнĕ, тет.

577. Кĕҫĕн пуç ҫарăнман, мăн пуç кайнă, теççĕ.

578. Кĕтсе кĕтĕк пулнă теççĕ.

579. Кĕтӳ кĕтĕвĕççĕр çӳренине курăймăн, теççĕ.

580. Кĕҫӳне самана йĕп çинҫе, теççĕ.

581. Клухуй панамаршĕн икĕ хут ҫан çапмасть, теççĕ.

582. Клухуй ҫинĕçукшĕн ик хут ҫан çапмаççĕ, теççĕ.

583. Кримăски калпак пуç çутти, кĕмĕл çĕрĕ ал çутти, ыр çын кинĕ пӳрт çутти.

568. Кудрявому не расчешешь вол с без медного гребня [1]).

569. Нет ничего полезнее вербы. М.

570. Не увидишь бочки без обручей М.

571. Горечь редьки в реке (=в тихом омуте черти водятся). М.

572. Нельзя отпереть амбара, не повернув ключа. М.

573. Книга все знает. М.

574. Пожалел для зятя осеннего кислого молока. М.

575. Маленькую головку не остановил—пропала большая голова. М.

576. Не остановишь маленькую головку туго придется большой голове. М.

577. Не унялась маленькая головка—пропала большая голова.

578. От жданья добра не будет.

579. Никогда не увидишь; чтобы стадо ходило без пастуха

580. Нынешнее времена на иголке. М.

581. Из-за глухого пономаря два раза не звонят. М.

582. Из за глухого дьячка два раза не звонят. М.

583. Крымская шапка — украшение («свет») для головы, серебрянное кольцо—украшение для руки, добрая молодушка—украшение дома. М.

Л.

584. Лайăх лашана пĕр пушă, ҫоман лашана çĕр пушă.

585. Лайăх ăслă, кăмăллă çын пурне те йурăхлă.

586. Лайăх вĕренекен аҫана пурăнма та аван, теççĕ.

587. Лайăх лайăх-и, ҫинер лайăх-и?

588. Лайăхрах тăмланса çӳрес пулсан, кантăрпа йĕтĕн уйа ак, сурăх çăнĕ [1]) çук пулсан, сурăх йăшлăрах усра, теççĕ.

589 Лара-тăра пĕлмен çынна паллă килнĕ, теççĕ.

590. Лаҫакари каска çĕрнĕ, тип çĕрти çĕр çултан тин çĕрнĕ, теççĕ.

591. Лаша пуласси тихаран паллă, ĕне пуласси пăруран паллă теççĕ.

592. Лаша вăрра кайсан, нăхтине хыçалтан кăларса ывăт.

593. Лаша пуласси тихаран паллă, етем пуласси аҫаран паллă.

1) Çăмĕ.

584. Хорошей лошади один кнут, ленивой лошади сто кнутов. М.

585. Хороший, умный, приветливый человек всем приятен. М.

586. Мальчику, который хорошо учится, и жить хорошо. М.

587. Хорошо ли то, что хорошо, или хорошо то, что красиво?

588. Если тебе хочется получше одеваться, то сей в поле коноплю и лен; если нет овечьей шерсти, то держи побольше овец. М.

589. Кто не умеет себя держать, тот получит отметину.

590. Колода, которая в топком месте, сгнила; а которая—в сухом месте, сгнила только через сто лет. М.

591. Будущая лошадь приметна уже в жеребенке, будущая корова—в теленке.

592. Если воры увели лошадь, то и узду выброс вслед ей. М.

593. Будущая лошадь приметна уже в жеребёнке, будущий человек—в ребёнке.

1) Упрямца надо проучить?

594. Лашана вăрласа кайсан, тупма тăршма хушмаççĕ: Лашу хыççĕн йăвенне те кăларса ут, теççĕ.

595. Лутра çынна лутка [1]) çурă, теççĕ.

596. Лутра çын лутка çур ĕçет, теççĕ.

594. Если украдут лошадь, то советуют не стараться найти ее: «Вслед за лошадью выкинь и ее узду».

595. Нискорослому человеку полторы кадочки (нужно пищи, питься). М.

596. Низенький человек может выпить полторы кадушки.

М.

597. Майсăр çынна кушак пăхма та йураман тет.

598. Макăрман ађана амăшĕ ђĕђĕ памасť, теççĕ.

599. Макăрман ађана ђĕђĕ памаççĕ.

600. Макăрман ађана ђĕђĕ паракан çук, теççĕ.

601. Малтан алтакан куккукăн пуçĕ кукша пулнă, тет.

602. Малтан йăмăх пулсан, кайран шупкалаť.

603. Малтан автакан кукăн [2]) сасси çĕтнĕ, теççĕ.

604. Малтан савăнсан, кайран макăрас пулат, тет.

605. Малтан хăйне асла хуракан кайран кĕçĕн пулĕ.

606. Малтан хăйне асла хуракан кайран кĕçĕн пулнă, теççĕ.

607. Малтан хăйне асла хуракан кайран кĕçĕн пулат, теççĕ.

608. Малтан хыптаракан çын кайран тăранаť.

609. Малтан шухăшламасăр пĕлмен ĕçе ан ту, теççĕ.

610. Малтан ăс çитмесен, кайран [3]) ан та шухăшла.

611. Малтан ĕмĕтленсен, кайран типсе йулас пулат, тет.

612. Малтан, ĕç тума тытăнађђĕн, шухăшлас пулат, теççĕ.

613. Мана тимен [4]) çĕлен-калта хăй çулĕпе хăй çÿретĕр.

614. Маннă йапала çине йур çăваť, тет.

615. Марйе аппа вилнĕ çĕре Тарйе аппа хатĕр, теççĕ.

616. Мир—мур, теççĕ.

617. Муллă çынна мур тивмен, тет.

618. Муллă çынпа ан тавлаш, вăйлă çынпа ан кĕреш.

619. Мун-кун килет, Мун-кун килет, пирĕн куçран вут килет.

597. Беспорядочный человек не годится и для ухода за кошкой. М.

598. Ребенку, который не плачет, мать не дает груди.

599. Не плачущему ребенку груди не дают. М.

600. Не плачущему ребенку ребенку никто не дает груди.

601. У кукушки, которая рано закуковала, голова оплешивела. М.

602. Слишком яркий цвет потом полиняет (выцветает).

603. У кукушки, которая рано закуковала, пропал голос. М.

604. Если сначала будешь веселиться, то после придется плакать. М.

605. Кто сначала возвышает себя, тот унизится. М.

606. Тоже.

607. Тоже.

608. Кто сначала кормит (другого), то потом насытится.

609. Предварительно не обдумав, не делай незнакомого дела. М.

610. Если сначала не хватит ума, то после уж и не думай. М.

611. Понадеешься—ни с чем останешься.

612. Прежде чем приняться за дело, надо его обдумать. М.

613. Гады, которые не трогают меня, пусть ходят своей дорогой. М.

614. Забытую вещь заносит снегом. М.

615. К смерти тетки Марьи готова тетка Дарья. М.

616. Мир—мор. М.

617. Богатого человека и мор не берет („не трогает“).

618. С богатым не тягайся („не спорь“), с сильным не борись. М.

619. Пасха идет, Пасха идет, из наших глаз огонь идет (пышет). М.

КН... ССР
г. Чебоксары

[1]) Кадочка в 1 арш. вышины и в 3/4 арш. в диаметре.

[2]) Куккукăн.

[3]) Рук. «кайăран»

[4]) =тивмен.

620. Мунҫа хутма вуттăна ан шелле, сăра тума хăмлăна ан шелле, теҫҫĕ.

621. Мухтавлă хĕр туйĕнҫе пăсарнă, теҫҫĕ.

622. Мухтавлă хĕр туйĕнҫе пăсараҫ, теҫҫĕ.

623. Мухтаннă хĕр туйĕнҫе пăсарнă.

624. Мухтанакан хĕр туйĕнҫе пăсарнă, тет.

625. Мăнни мăнăрах çыртаҫ, теҫҫĕ ваттисем.

626. Мăнтăрлансан, йыгти те йышне палламас, тет.

627. Мĕн акнă, вăл шăтаҫ.

628 Мĕн акнă, çав шăтаҫ, теҫҫĕ.

629. Мĕн вăрлăх акаҫ, çав шăтаҫ, теҫҫĕ.

630. Мĕн каланине суйа ан ту, теҫҫĕ.

631. Мĕн пĕҫерсен, ăна çимесĕрех хăварман, теҫҫĕ.

620. На баню не жалей дров, на пиво не жалей хмелю. М.

621. Хваленая невеста наневежничала на свадьбе.

622. Т о ж е.

623 Хвалившаяся невеста наневежничала на свадьбе.

624. Невеста—хвастунья наневежничала на свадьбе.

625 Большой побольше откусывает .М.

626. Разжиревшая собака не узнает своего хозяина. М.

627. Что посеешь, то и вырастет. М.

628. Т о ж е.

629. Какое семя посеешь, то и взойдет. М.

630. Давши слово держись. М.

631. Что сваришь, то и с'ешь. М.

Н.

632 Найанăн турри çывăхра, теҫҫĕ.

633. Наҫар выҫăх шӳрпинҫен вăтаннă, тет.

634. Наҫар урапа тата хытăрах шалтăртатаҫ, теҫҫĕ.

635. Наҫар сăмахăн тĕрекĕ çук, лайăх сăмахăн тĕрекĕ пур, теҫҫĕ.

636. Наҫар сухалана ана çине çум пусаҫ, наҫар çынна çын пусмăрлаҫ.

637. Нікам та хăй хӳри çине сысмасҫ.

638. Ним пĕлмен çынна шыв та ерех, теҫҫĕ.

639. Нумай çывăракан ыйхинҫен киленнĕ, тет, ир тăракан ĕçĕнҫен киленнĕ, тет.

640. Нумай ĕмĕтленекен сахаллине çухатнă

641. Нумай итле, сахал калаç, теҫҫĕ.

642. Нумай калаçнин усси çук, теҫҫĕ.

643. Нумай калҫса, çу тухмасҫ, теҫҫĕ.

644. Нумай та пĕтет, сахал та çитет.

645. Нумайа ĕмĕтленекен сахала çухатнă, теҫҫĕ.

646. Нумайа ĕмĕтленекенĕн сахал та çук, теҫҫĕ.

647. Нумайăшне ҫăтнине сахаллине ҫăт, теҫҫĕ.

648. Нумайа кĕтекен сахалсăр йулаҫ, теҫҫĕ.

632. У ленивца бог недалеко. М.

633. Тощее животное испугалось своего супа (сваренного из этого мяса). М.

634. Плохая телега сильнее стучит. М.

635. Плохое слово не имеет силы, хорошее слово имеетсилу. М.

636 Плохо вспаханный загон покрывается сорною травою, плохого человека обижают люди. М.

637. Никто не нагадит на свой хвост. М.

638. Для ничего не знающего человека и вода—водка. М.

639. Долго спящий нашел удовольствие (насладился) во сне, встающий рано нашел удовольствие в работе. М.

640. Кто надеялся на многое, тот потерял и малое. М.

641. Больше слушай, меньше говори М.

642. Нет пользы в многословии. М.

643. Многословием масла не выжмешь М.

644. И многое кончается и малого хватает. М.

645. Надеялся на многое, потерял и малое. М.

646. У того, кто надеется на многое, нет и малого. М.

647. Если терпел много, то уж потерпи и малое. М.

648. Ожидающий многого остается без малого.

649. Нумай ӗмӗтленекен сахаллине çухатаҫ, теççӗ.

650. Нумайа ӗмӗтленекен валлі, сахалли те пулман.

651. Нуша кулаç çиме вӗрентет, тет.

652. Нумайа хапсӑнсассӑн, сахалли те пулаймӗ, теççӗ.

649. Кто надеется на многое, тот и малое потеряет. М.

650. Кто надеется на многое, тому нет и малого.

651. Нужда научит есть калачи. М.

652. На многое позаришься—и малого не будет. М.

П.

653. Пайан ура çинҫе, ыран шӑтӑкра, теççӗ

654. Паракантан ил, çапакантан тар.

655. Парӑн — илеймӗн, шырӑн — тупаймӑн, теççӗ.

656. Парне пани хаклӑ мар, йуратни хаклӑ.

657. Пасар укçана йуратат, каҫҫӑ куçӗ хӗрсене йуратат, теççӗ.

658. Пасара кайсан, çын валлі кулаç илме хуман.

659. Патакпа çапсан, упа та ташлама вӗренет, теççӗ.

660. Паттӑрпа ан кӗреш, пуйанпа ан тавлаш.

661. Паттӑр çынна ним каласа та çӗнтерес çук, теççӗ.

662. Паттӑрӑн пуçӗ çухалнӑ, тараканнийӗн йӗрӗ çухалнӑ, теççӗ.

663. Паттӑрӑн пуçӗ выртнӑ, тараканӑн йӗрӗ выртнӑ

664. Пере пӗлмен ал туйи хӑйне тивнӗ, теççӗ.

665. Пере ӗлмен ал туйи калла çаврӑнса лекнӗ.

666. Пеме пӗлмен ал туйи, хӑне çавӑрӑнса тивнӗ.

667. Пере пӗлмен ал туйи хӑйне çавӑрӑнса тивет, тет.

668. Переймен пысӑк çӗкленӗ, теççӗ.

669. Пере пӗлмен ал тӑвви хӑпа çаврӑнса тивет, теççӗ.

670. Пылҫӑк çине кӗрсен, ніхӑçан та пылҫӑкланмасӑр çук.

671. Пырна пула пуçна çийӗн, теççӗ.

672. Пысӑккине хапсӑнакан пӗҫӗккине (рук. пӗçӗккине) аллинҫен çухатнӑ, теççӗ.

673. Пысӑка ӗмӗтленекен çынӑн пӗҫӗкки та çухалаҫ, теççӗ.

653. Нынче на ногах, а завтра в могиле. М.

654. Бери у того, кто дает; беги от того, кто бьет.

655. Дашь—не воротишь, станешь искать—не отыщешь.

656. Не дорог подарок, дорога любовь. М.

657. Базар любит деньги, глаза парня любят девиц. М.

658. Для другого не велено даже на базаре купить калачи. М.

659. Станешь бить палкой, и медведь плясать выучится. М.

660. С сильным не борись, с богатым не тягайся, М.

661. Силача никаким словом не одолеешь. М.

662. У храброго пропала голова, у бегущего пропал след. М.

663. У храброго голова легла, а бегущего (только) след остался. М.

664 Неумело кинутый свист [1]) задел самого, кто кидал.

665. Тоже.

666. Неумело брошенная палка возвращается и попадает в того, кто ее бросил М.

667. Т о ж е.

668. Кто не в силах нанести удар, тот хватается за большую (дубину и т. п.). М.

669. См. 666.

670. Если залезешь в грязь, непременно испачкаешься. М.

671. Из-за глотки погубишь (с'ешь) свою голову. М.

672. Кто зарится на большое, лишится и малого. М.

673. Кто расчитывает на большое, у того пропадает и малое. М.

---

[1]) Короткая палка.

674. Пысăка ĕмĕтленекен пĕҫиккине çухатат, теççĕ.
675. Пысăка ĕмĕтленекен хутаç çакса ыткалама кайнă, теççĕ
676. Пысăк сăмах калиҫҫен пысăк ҫĕлĕ çăкăр тыт, теççĕ.

677. Пиллĕх илсен, пин ылттăн, теççĕ
678. Пилсĕр çынна «вилĕ пӳлĕхçи» теççĕ.
679. Питтĕн ашшĕ-амăшĕ вилмен, тет.
680. Пуйма кайакан вилнĕ, вилме кайакан пуйса килнĕ, теççĕ.

681. Пуйма кайнă[1]) вилсе килнĕ, вилме кайнă пуйса килнĕ, теççĕ.

682. Пуйанăн кушакĕ те куйан[2]) тытаҫ, теççĕ.
683. Пуйанăн йытти тилĕ тытат, кушакĕ—мулкаҫă.
684. Пуйанăн автанĕ те çăрха, теççĕ.
685. Пуйанăн автанĕ те çăмарта тăват тет, теççĕ.
686. Пуйанăн кушакĕ те кайăк[3]) тытат, тет.
687. Пуйан пурнас тесен, кăмака çинҫе выртма йурамасҫ, теççĕ.
688. Пуйан сăра туçан, йурлă çыннăн çăпати çĕтĕлет.
689. Пуйан çыннăн куç выçă, теççĕ.
690 Пуйан çынăн кошакки те полă тытаҫ, тет.
691. Пуйан çынăн кирек мĕн каласни та килшет, теççĕ.
692. Пуйан çынăн кошакки те полă тытаҫ, теççĕ.
693 Пули-пулми çынпа ан çыхлан, теççĕ.
694. Пулас ҫихан пăхăнҫен палла.

695. Пулас тиха пăхăнҫен палла.

696. Пулă çийес тесессĕн, шыва кĕрес пулаҫ.
697. Пулă курмана шӳрпи, теççĕ.
698. Пуп куç вӳхреп куç, теççĕ.

699. Пупне кура прихуҫĕ, теççĕ.
700. Пур çемйенĕн пĕр канаш пултăр, пĕр йал халăхĕ тӳрĕ пурăнма кирлĕ теççĕ.

674. Кто расчитывает на большое, потеряет и малое М.
675. Кто жадничает, тот пойдет с сумой по миру. М.
676. Вместо того, чтобы говорить громкие слова, лучше возьми большой ломоть хлеба. М.
677. Полученное благословение дороже золота («тысяча золотых»).
678. ? человека называют «пастухом мертвецов».
679. У крепкого отец и мать живы М.

680. Кто отправился за богатством, умер; кто отправился на смерть, воротился богатым, М.
681. Кто отправился за богатством, воротился мертвым; кто отправился на смерть, воротился богатым. М.
682. У богатого и кошка ловит зайцев. М.
683. У богатого собака ловит лисиц, а кошка зайцев. М.
684. У богатого и петух иноходец. М.
685. У богатого и петух несется. М.

686. У богатого и кошка ловит зайцев. М.
687. Если хочешь жить богато, то нельзя валяться на печи. М.
688. Когда богатый сварит пиво, у бедняка взнашиваются лапти. М.
689. У богатого глаза завистливы. М.
690. У богатого и кошка рыбу ловит. М.
691. Богатый что ни скажет, все ему идет. М.
792. У богача и кошка рыбу ловит. М.

693. Не связывайся со всяким (без разбора).
694. По дерьму видно—какая будет лошадь. М.
695. По дерму видно, какова будет лошадь[1]). М.
696. Если хочешь рыбы, надо лезть в воду. М.
697. Кто не видал рыбы, тому уха.
698. Поповский глаз—величиной с погреб. М.
699. Каков поп, таков и приход. М.
700. Пусть вся семья живет в согласии; односельчане должны жить дружно.

---

[1]) Вар. «кайан».
[2]) Мулкаҫă.
[3]) „Кайăк" местами означает зайца.

[1]) Точнее: «хорошего жеребенка видно по дерму»?

701. Пур ӗух пылпа, çук ӗух шывпа, теççĕ.
702. Пур, тесе, ан мухтан, çук, тесе, ан хурлан, теççĕ.
703. Пур пĕрле, çук çурмала, теççĕ.

704. Пур пархат тăхăннă, çук çурхах[1]) тăхăннă, теççĕ.
705 Пур ӗухне калмăкла, çук ӗухне пушкăртла.

706. Пуртĕ хатĕр: çуни Хусанта, хăмăҫĕ пасарта.
707. Пур пурçăн тăхăнаҫ, çук çурхах тăхăнаҫ.
708. Пурнăн ĕмĕрте кирлĕ мар катăк пуртă та кирлĕ пулнă, тет.
709. Пурăнан пурнăç пăрăнăççăр пулмасҫ.
710. Пурнăçа темиçе çын тытмасҫ, пĕр çын тытаҫ, теççĕ.
711. Пурне хăй йенелле кукăрăлаҫ, теççĕ.
712. Пурт аврине тытма хăтланса, пуртине шыва йанă.
713. Пуртă аврине тытма хăтланса, хăй те шыва кайнă, тет.
714. Пуртă, çын касмасăр, вакламасҫ, теççĕ.
715. Пуртă пур та, пуштӳш çук, пуштӳш пур ӗухне пурти çук.
716. Пуртă аврине тытма хăтланса, пуртине йанă, тет.
717. Пусса ан сур, шывне хăвах ĕçĕн, теççĕ.
718. Пускил лайăх пулсассăн, çук пурнăç та палăрмасҫ; пускил усал пулсассăн, пур пурнăç та, саланаҫ.
719. Пуçна айалалла ан ӗик, çӳлтен çекĕл çакланатĕ.
720. Пуçĕнӗен ĕçерсен, хӳринӗен йарса тытас çук.
721. Пуçа ӳксен, пушмак, теççĕ.

722. Пуçра çӳç кăтра—пурăнăç тип хытă; пуçра çӳç йака—пурăнăç çемçе пуйан, теççĕ.

[1]) Çурхах—перепонка.

Ваттисем калана сăмахсем.

701. Когда есть—с медом, когда нет—с водою. М.
702. Не хвались, когда есть; не огорчайся, когда нет. М.
703. Что есть—вместе, чего нет—пополам.
704. Богатый одевается в бархат, бедный в пленку М.
705. Когда есть как калмык (или: по—калмыцки), когда нет—как башкирин (или по-башкирски [1]). М.
706. Все готово: сани в Казани, хомут на базаре. М.
707. Богатый одевается в шелк, бедный одевается в пленку. М.
708. В жизни и ненужный обломленный топор понадобится. М.
709. Жизнь не без невзгод.

710. Жизнью руководит не несколько человек, а один. М.
711. Палец гнется к себе. М.

712. Пытаясь схватить топорище, упустил в воду топор. М.
713. Пытаясь схватить топорище, и сам утонул.
714. Топор сам собою не рубит. М.

715. Топор есть—лутошек нет, лутошки есть—топора нет. М.
716. Пытаясь схватить топорище и упустил топор.
717. Не плюй в колодезь, тебе же придется из него пить. М.
718. С хорошими соседями и бедность неприметна, с дурными соседями и достаток идет прахом. М.
719. Не вешай голову, а то сверху крючек подденет. М.
720. Выпустишь голову, за хвост не поймаешь. М.
721. Если случится необходимость, то и башмаки будут (т. е. сумеешь и башмаки сшить [2]).
722. Кудрявый [3]), а живет колотится; с гладкими волосами, а живет в привелье и богатстве.

[1]) «По калмыцки»—изобильно, с обжорством, «по башкирски»—скудно.
[2]) Срв. азерб. посл.: «Башына gälmäjän башмакчы олмаз», т. е. кому нет необходимости, тот не сделается башмачником.
[3]) Кудрявый—считается счастливым.

723. Пуҫтарма ӗмӗрлӗх, саланма виҫ кунлӑх.
724. Пушӑ арман ҫилсӗр[1]) авӑрат, теҫҫӗ.
725. Пӳ йепле, ӗмӗр ҫапла килет, тет.
726. Пӳкле кайан пӑх хыпнӑ, ҫаврӑнӑҫ кайан ҫу хыпнӑ.

727. Пӳкле кайакан пӳлӗнет, ҫавра кайакан ҫӑв ҫийет, теҫҫӗ.

728. Пӳклерен кайан пӑх хыпат, ҫавӑрӑнӑҫран кайан ҫу хыпат, теҫҫӗ.
729. Пӳрмен йапала ҫӑвартан тухса ӳкет, теҫҫӗ.
730. Пӳрмен ҫӑкӑр ҫӑвартан тухса ӳкет, тет; пӳрнӗ ҫӑкӑр шӑл хайӑрса кӗрет, тет.
731. Пӳрт илемне кӗтес кӳмес, кукӑль кӳрет.
732. Пӳрт кӗтеспе илемлӗ мар, кукӑльпе илемлӗ.
733. Пӳрт ҫине хӗҫ тимӗр ҫаптарса, пӗр ҫын виҫ ҫул пӑхса ларьӑ, теҫҫӗ.

734. Пӳртре вут йепле шарласа ҫунаҫ, пурӑнӑҫ та лайӑх пурӑннӑ ҫух ҫапла енче[2]) пыраҫ, теҫҫӗ.
735. Пӑр ҫӳхе пулсан, путса анасси ҫӑс пулаҫ.
736. Пӑр ҫине пӳрт лартса, нумай пурнаймӑн, тип ҫӗре лартсан, пӳрҫӗ ҫӗреҫҫӗн пурнӑн, теҫҫӗ.

737. Пӑркӑҫ пӗрте каймасан та, йӑп[1]) тӑрӑш кайат, теҫҫӗ.

738. Пӑсасси ҫӑмӑл та, тӑвасси хӗн, теҫҫӗ.
739. Пӑсармасӑр шӑршӑ тухмаҫ.
740. Пӑхма хӗрсем хӗвел пек, ӑшӗ—ҫиккисем хура йун.

741. Пӑшалсӑр, вӗшлесӗр мулкаҫӑ тытма ан ӗмӗтлен; ӗҫлесе ҫӑккӑр ҫиме ӗмӗтлен, теҫҫӗ.
742. Пӗлмесӗр хӑтланакан пуҫне ҫинӗ, теҫҫӗ.
743. Пӗлмерӗн—пӗр сӑмах, пӗлтӗн—ҫӗр сӑмах.

[1])Вар.: ҫилсӗрех.
[2])-ӑнса.
[3]) Вероятно, надо сказать: „йӗп“?

723. Собирать надо век, а промотать (расточить) можно в три дня. М.
724. Порожняя мельница без ветра мелет. М.
725. Каков стан (телосложение), таков и век. М.
726. Кто пошел прямо, тот отведал калу; кто пошел окольным путем, тот отведал масла. М.
727. Кто пойдет прямо, (запыхается), задержится; кто пойдет кругом, наестся масла.
728. См. 726.

729. Что не суждено судьбою, то изо рта назад выпадает.
730. Кусок хлеба, который не суждено съесть, выпадает изо рта; суженый кусок сам влезет в рот, разжав зубы. М.
731. Не красна изба углами, а красна пирогами. М.
732. Т о ж е.

733. Говорят, что один человек, покрывши свою избу железом, целых три года сидел и любовался ею.
734. Как шумно горит в избе огонь, так же гладко идет и жизнь, когда живется хорошо. М.
735. Если лед тонок, то очень скоро можно провалиться. М.
736. В избе, построенной на льду, долго не проживешь; а если поставишь ее на сухом берегу (месте), то будешь жить в ней до тех пор, пока она не сгниет.
737. Если завертка[1]) и совсем не идет (не поворачивается) дальше, все же она повернется хоть на длину иголки?
738. Портить легко, а делать трудно. М.
739. Без огня дыма не бывает[2]). М.
740. На взгляд девицы, как солнышко, а души их (нутро их) полны черной крови.
741. Не надейся промыслить (добыть) зайца без ружья и без гончей; не надейся быть сытым, не поработав.
742. Тот, кто поступал неумело, погубил себя. М.
743. Не знаешь—одно слово, знаешь—сто слов.

[1]) Палка для закручивания веревки.
[2]) Точнее: «Nullus exsistit odor flatu uentris non emisso».

744. Пĕлекен ĕçе хул пуççи çинҫе йăтса çӳрес çук, теççĕ,

745. Пĕлмен туйĕнҫе пăсарнă.

746. Пĕлмен ашшĕнҫен ыйтсассăн, ывăлĕ те нимĕн пĕлмест, теççĕ.

747. Пĕлменни выртат, пĕлекенĕ ҫупат, теççĕ.

748. Пĕлмесĕр çынна ан вĕрентме хăтлан, теççĕ.

749. Пĕлтĕн—çĕр сăмах, пĕлмерĕн—пĕр сăмах, теççĕ.

750. Пĕлнинҫен пĕлменни нумай, теççĕ.

751 Пĕр алăран вĕçернĕ тăманана тытма ан та шухăшла.

752. Пĕр выҫăх хыççĕн пур выҫăх та кайат.

753. Пĕр вăкăр çăмартине çиҫĕ çул сыхланă, теççĕ.

754. Пĕр куна кайма тăрсан, çиҫĕ кунлăх хатĕрле.

755. Пĕр кун каймалăх çĕр пулсан, çиҫĕ кунлăх çăкăр ил, тенĕ.

756. Пĕр кун иртсе кайсан, пин кун хăваласан та çитес çук.

757. Пĕр кунлăх кайас тесессĕн, çиҫĕ кунлăх çăкăр ил.

758. Пĕр кун каймалли çĕре виҫ кунлăх çăккăр ил, теççĕ.

759. Пĕр кун каймаллăх çĕр пулсан вунĸ кунлăх çăкăр ил.

760. Пĕр кун каймалла пулсан, çиҫĕ кунлăх çăккăр хатĕрле, теççĕ.

761. Пĕр кун каймалла çĕре çиҫĕ кунлăх çăкăр хатĕрле, теççĕ.

762. Пĕр паттăрăн ик алли тăват çĕрĕн çапăçмасть, теççĕ.

763. Пĕр пĕк пурăннине нимĕн те çитмест.

764. Пĕр пăрçа пин ылттăн, теççĕ.

765. Пĕр çын пĕлнĕ ҫухлĕ тепри пĕлес çук.

766. Пĕр çăвартан ăшши те, сивви те тухат.

767. Пĕр çын пăснине пин çын та тӳрлетеймасть [1]) теççĕ.

---

[1]) Тӳрлетеймест.

744. Ремесло, которое знаешь, не придется носить на плечах (оно плеч не оттянет).

745. Не знающий наневежничал [1]) на своей свадьбе. М.

746. Если сын спросит невежественного отца, то и сам ничего не будет знать. М.

747. Незнайка лежит, а знайка бежит. М.

748. Не пытайся учить другого не зная сам (того, чему учить). М.

749. Знаешь—сто слов, не знаешь—одно слово. М.

750. Неизвестного больше, чем известного. М.

751. И не думай поймать вновь сову, раз выпущенную из рук М.

752. За одной скотиной идет все стадо. М.

753. Одни бычачьи testiculos караулил семь лет (ожидая, когда они оборвутся и упадут).

754. Вздумаешь поехать на день, бери запасу на неделю. М.

755. Поедешь на день, бери хлеба на неделю.

756. Пропустишь один день—в т. сячу дней не нагонишь. М.

757. Вздумалось поехать на день, бери хлеба на неделю. М.

758. Отправляясь в путь на день, бери хлеба на три дня. М.

759. Если предстоит однодневный путь, бери хлеба на двенадцать дней. М.

760. См. 757.

761. Тоже.

762. Один богатырь со своими двумя руками не может драться одновременно в четырех местах. М.

763. Ничто не может сравниться с скромной жизнью. М.

764. Одна горошина стоит тысячи [2]) червонцев. М.

765. Сколько знает один, другому столько не знать. М.

766. Из одних и тех же уст исходят и приветливое и неприветливое («и тепло и холод»).

767. Что испортит один, того не исправить тысяча. М.

---

[1]) Flatum (vel crepitum) ventris emisit.

[2]) Здесь «тысячи»—род. пад. ед. ч.

768. Пĕр така ăçта йертсе кайат, пур вĕтĕвĕ те ун хыççăн пырат.

769. Пĕр такансан, ирӗӗн, теççĕ.

770. Пĕр спаççипăшĕн пĕр çул ĕçленĕ, теççĕ.

771. Пĕре кассах йăвăçа ӳкереймĕн, теççĕ.

772. Пĕре кас та, виççĕ пăх, теççĕ.

773. Пĕре армана вĕреннĕ йытă армана каймасăр ӗăтаймасть, теççĕ.

774. Пĕри сĕм-вăрманта пышă аврилăх [1]) тупайман, теççĕ.

775. Пĕри çапма тытăнаӗӗн тепри пусса ӳкĕрнĕ, теççĕ.

776. Пĕрре алăран ĕçерсен, тытаймăн, теççĕ.

777. Пĕрре çуллă пăтă çисен, вăл йаланах пулмасть, хăш ӗух тип çăккăрта çийес пулать, теççĕ.

778. Пĕӗĕккине йăрса, пысăккине ан ĕмĕтлен, теççĕ.

779. Пĕӗĕккĕ телейе пăрахса, пысăккине ан кĕт.

780. Пĕӗĕк хуранăн пăтти гутлă.

781. Платникĕн пӳрӗ шăтăк, тет, çĕвĕçĕн кĕрĕкĕ çĕтĕк, тет.

782. Пратшăн прат кĕтӳ кĕтнине рат, теççĕ.

768. Куда ведет один баран, туда за ним идет и все стадо. М.

769. Стоит только раз запнуться (споткнуться)—до утра (т. е. стоит ошибаться раз, а там так и пойдет ошибка за ошибкой).

770. За одно спасибо работал целый год.

771. Одним тяпком (ударом) дерева не свалишь. М.

772. Раз тяпни, да три раза посмотри. М.

773. Если собака навадится бегать на мельницу, так ее туда и тянет. М.

774. (Некто) в дремучем лесу не нашел (дерева) на кнутовище. М.

775. Пока один собирался ударить, другой его смял. М.

776. Раз из рук выпустишь—не поймаешь. М.

777. Не все каша с маслом, иной раз приходится и черствый хлеб есть. М.

778. Упустив малое, не надейся на большое. М.

779. Бросив маленькое счастье, крупного не жди. М.

780. В маленьком котле вкусная каша. М.

781. У плотника изба дырявая, у портного полушубок худой. М.

782. Брат рад (злорадствует), если другой брат пасет стадо. М.

С.

783. Саккăрăн йавнă саламат, саккăр çĕрелле кайаймасть, саккăрăн пурнакан çынсен саккăр ĕçĕ пулса тăрат, вунулт урисемпе саккăр çĕрĕн кайаççĕ, теççĕ.

784. Саккăрăн авăн çапма, çиӗӗн çиме, иккĕн кĕрешме, пĕӗӗн шухăшлама аван, теççĕ.

785. Сала-кайăк салатать, илен-кайăк пуçтарать.

786. Саланма ӗасах, пуçтарăнма ӗасах мар.

787. Салтак ăсĕ каӗака ăсĕ, теççĕ.

788. Салтакăн, кăнтăрла иртсен, ăс кайать, тет.

689. Санăн уру çине ĕне пусайманха, теççĕ.

790. Саншăн сурăх та сыв пултăр, кашкăр та тутă пултăр.

783. Нагайку, сплетенную из восьми ремней, нельзя сразу пустить в ход на восемь сторон, а у людей, живущих ввосьмером, сразу восемь дел делается: своими шестнадцатью ногами они сразу идут в восемь мест.

784. Ввосьмером хорошо молотить, всемером—обедать, вдвоем—бороться, в одиночку—думать.

785. Воробей расточает, а . ? .[1]) собирает.

786. Разойтись легко, собраться не так легко. М.

787. Солдатский ум, что козий ум. М.

788. У солдата, говорят, после обеда ум пропадает. М.

789. На твою ногу еще корова не наступила [2]). М.

790. По-твоему, чтобы и овца была здоровою, и волк был сытым. М.

---

[1]) Пышă аврилăх=пушă аврилăх.

[1]) Прирученная пташка.

[2]) Т. е. ты еще неопытен.

791. Сахал, ситет нумай ситмест.

792. Сылтăм аллу тунине, сулахай аллу ан пĕлтĕр, теççĕ.
793. Сылтăм куçу курнине сулахай куçу ан куртăр, теççĕ.
794. Сысна уйăхпа хĕвеле уйăраймасăр, теççĕ.
795. Сысна йаланах пăрçа улăм çинĕе выртат, теççĕ.
796. Сысна хырăмне аш та пăсмасăр, теççĕ.
797. Сысна пĕкĕрçне [1]) пĕлмест, теççĕ.
798. Сыснана сурăх тумалла мар.
799. Сыснаран сурăх пулмасăр, теççĕ.
800. Сыснаран йăтă çуралмасăр, теççĕ.
801. Сивĕ-çу ĕĕресси тулашĕнĕенех паллă.
802. Сиввине-ăшшине корнă çын.

803. Суйапалан пур çĕре те çитĕн, кайалла тавăрнаймăн, теççĕ.
804. Суйессӳпе тĕнĕене витĕр тухăн, кайалла тавăрăнас çук.
805. Суйлан йышне тупман, тет.

806. Суйлакан Суйпикене илнĕ, тет.

807. Суйлакана суйланăкĕ, тет.
808. Суккăр йĕп тупат, теççĕ.
809. Суккăра сĕт те шыв.
810. Сулутнĕк сахал та, çапах хаклă, теççĕ.
811. Сурăх ылхаң кашкăра çитмест.

812. Сурăхран каçака тума çук, каçакаран сурăх тума çук, теççĕ.
813. Сусăра сусăр çĕклет, теççĕ.
814. Сут умне тăраççĕн, йупа кутне тăр.
815. Сут тăвакан çынăн наклаçĕ валта, паритĕ кайра, теççĕ.
816. Сутлă инке сут тăвать, йасар инке йал усрать.
817. Сутма атте кирлĕ мар, илме атте кирлĕ, теççĕ.
818. Сухаласа пĕтерсен ана таврa тимĕр карта çавăр, теççĕ.
819. Сăмах ылттăнпа пĕр, теççĕ.
820. Сăмах сала-кайăк мар, тухса кайсан, тытас çук, теççĕ.
821. Сăмах вылях мар, тухса кайсан, кайала тавăрмала мар, теççĕ.
822. Сăмаха пĕр каласа йарсассăн, тытаймăн, вăл çерçи мар вара.

[1]) Вар.: пекĕрçне.

791. Когда немного—хватает, когда много—не хватает. М.
792. Левая рука пусть не знает того, что делает правая. М.
793. Левый глаз пусть не видит того, что видит правый. М.
794. Свинья не отличает месяца от солнца. М.
795. Свинья все время валяется на гороховой соломе. М.
796. Желудок свиньи и от мяса не портится.
797. Свинья не замечает своего горба.
798. Свинью не сделаешь овцой. М.
799. Свинья не сделается овцой.
800. От свиньи не родится собака.
801. Кадочка с салом узнается по ее наружной стороне. М.
802. Человек, видевший холод и тепло. М.
803 Кривдой дойдешь куда угодно, но назад не воротишься. М
804 Кривдой пройдешь свет насквозь, но назад не воротишься. М.
805. Разборчивый не найдет себе жены.
806. Разборчивый взял за себя Суйбиге [1]).
807. Разборчивому достался оборыш.
808. Слепой нашел иголку.
809. Слепому и молоко—вода. М.
810. Мал золотник, да дорог.

811. Овечье проклятье волку не вредит. М.
812. Из овцы не сделаешь козы, а из козы не сделаешь овцы. М.
813. Раненого раненый поднимает.
814. Чем предстать перед судом, лучше становись перед столбом. М.
815. У торгового человека убыток сначала, барыш после М.
816. Тетка-торговка торгует, развратная тетка держит [2]) деревню.
817. Продавать—отца не нужно, купить нужен отец. М.
818. Когда вспашешь, кругом загона устрой железную изгородь. М.
819. Слово ровно золоту. М.
820. Слов —не воробей, вылетит— не поймаешь. М.
821 Слово—не скотина, вырвется — назад не воротишь. М.
822. Однажды сказанного слова не поймаешь: оно не воробей. М.

[1]) Повидимому собст. имя дряхлой женщины.
[2]) Обслуживает?

823. Сăмаха калаҫҫĕн пуҫ тавра виҫҫĕ çавăрса шукăшла [1]).

824. Сăмаха пĕрре çăвартан кăларса йарсан, кайалла кӳртес çук, теҫҫĕ.

825. Сăмса айĕнҫи куранмас, вăрман урлă [2]) куранаҫ, тет (вар: катари курнаҫ).

826. Сăна сĕтел çине хумаҫҫĕ.

827. Сăра сакки сарлака. М.

828. Сăхă [3]) хĕр сухан çимен, тет, çисен, çулçисене те хăварман, тет.

829. Сĕм-çук çыннăн та, вилсессĕн, ним йулмасан, катăк пурттипе катăк çĕҫҫи йулнă, теҫҫĕ.

830. Сĕт шăҫ тăкăнман, ҫĕлĕм туртма вĕреннĕ.

831. Сĕҫĕ пĕҫерсен турăхне вĕрсе сыпнă, тет.

823. Прежде, чем сказать слово, обдумай: оберни его трижды вокруг головы.

824. Слова выпущенного один раз из уст, назад не воротишь. М.

825. Что под носом, того не видно, и что за лесом- видно. М.

826. Лицо (физиономию) не кладут на стол. М.

827. У пива лавка (нары) широка. М.

828. Жадная девка не ест луку, а коли примется есть, и перьев не оставит.

829. У самого бедного человека, по смерти, если и ничего не остается, то все же остается обломленный топор и сломанный нож. М.

830. Не успели выпасть молочные зубы, а уже выучился курить. М.

831. Кто обжегся на молоке, тот дует и на кислое молоко, когда его ест. М.

Ҫ.

832. Ҫакна çи те, çĕр çуна вут кас, теҫҫĕ.

833. Ҫамăрăка ҫармасан, ватта вăй килет.

834. Ҫамрăкла вĕренеймесессĕн, ватăлсан вĕренме хĕн вара.

835. Ҫамрăкла ĕҫрен йулакан, ватăлла тухат, тет.

836. Ҫапа пĕлмен ал-ура хăйнех кутăн лекнĕ, тет.

837. Ҫапакантан тар, паракантан ил теҫҫĕ.

838. Ҫапайман пысăк çĕкленĕ, теҫҫĕ.

839. Ҫапайман пысăккă йăтнă, тет.

840. Ҫапайман хăйĕнҫен пысăк çĕкленĕ, тет.

841. Ҫапма пĕлмен пушийĕ хăйне çавăрăнса тивнĕ, тет.

842. Ҫапăҫакан автан ніхăҫан та мăнтăр пулмасҫ.

843. Ҫар иртсе кайсан, паттăр нумай, теҫҫĕ.

844. Ҫар иртсе кайсан, патгăр нумай вара, теҫҫĕ.

832. Сʻешь это, и наруби сто возов дров. М.

833. Если не унимать молодеж, то старому придется трудненько. М.

834. Если в молодости не выучишься, то в старости учиться уже трудно. М.

835. Кто перестает выходить на работу в молодые годы, тот выйдет (опять) на старости лет. М.

836 Руки, которые не умеют бить угодили в того самого, который бил. М

837. Беги от того, кто бьет; бери у того, кто дает. М.

838. Кто не может ударить, поднимает (хватается за) большое.

739. Кто не в силах нанести удар, тот хватается за большую (дубину, палку и пр.). М.

840. Кто не может ударить, тот хватается за вещь больше себя.

841. Кнут, которым не умели бить, попал в того, кто им бил. М.

842. Петух забияка никогда жирен не бывает. М.

843. Когда пройдет войско, богатырей отыскивается много. М.

844. Тоже.

---

[1])=шухăшла

[2]) Правильнее: вăрман урли.

[3]) Кажется, есть вариант: „Сăпă хĕр“.... от араб. суфі (мусульманский мистик).

845. Çарă иртсен, паттăр нумай, теççĕ.

846. Çывракан ăйхи айакран ҫукун çулпа килет, теççĕ.

847. Çывракан йăтта ан тăрат, теççĕ.

848. Çылăх сырмăра, хурăнташ хурăн тăринҫе, намăс лапрара, теççĕ.

849. Çармăс Атăл урлă каçсан тин астунă, теççĕ.

850. Çынна мулшăн туман, мула çыншăн тунă.

851. Çынна усал тăвакан хăй те усал курать.

852. Çынпа ытлашши ак калаç, тăванна та ан ман, арăмна та ан ман, ху ҫунунтан урăх нікама та ан ман, вăхăҫĕ-вăхăҫĕпе ху ҫунна та йуса.

853. Çынна ытла ан кала, хăна та лекĕ.

854. Çынна мĕнле виçепе виçĕн, çавăнпах виçĕç, теççĕ.

855. Çынна ытла сăмах калиҫҫен, ытла ҫĕлĕ çăкăр çĕкле.

856. Çынна шыва путнине курсан, ăна шалалла шаҫҫапах тĕксе йар.

857. Çынна ĕç типĕтмеçт, хуйхă типĕтет.

858. Çыннăн аҫи-пăҫи хăвăнни пек пулмасть.

859. Çынне ан тив, хăвăнне ан пăрах, теççĕ.

860. Çынне хапсăнакан хăйăнне çухатнă, теççĕ.

861. Çынрине куриҫҫен сăмсу айĕнҫине кур.

862. Çынтан кулаҫҫен, малтан хăвăнтан кул, теççĕ.

863. Çынтан сахал илсе, нумай пар, теççĕ.

864. Çынта йăвăç çинҫи, теççĕ[1]).

765. Çыншăн кăвар ҫавма хушман, теççĕ.

866. Çыншăн кулаҫ илме хушман, теççĕ.

867. Çыншăн шăтăк ан алт, хăвах кайăн.

868. Çыншĕн ан куйлан, хушăн куйлан, теççĕ.

869. Çыншăн пусса тарăн ан алт, ху кĕрсе ӳкĕн.

---

1) Вар: Çын çинҫи—йăвăç çинҫи.

845. Когда войско уже прошло, всегда отыскивается много богатырей.

846. Сон спящего едет издалека по железной дороге. М.

847. Не буди спящую собаку. М.

848. Грех—в реке, родственник—на березе, стыд—в грязи. М.

849. Черемисин лишь тогда сообразил (в чем дело), когда переправился через Волгу.

850. Не человек создан для богатства, а богатство для человека. М.

851. Кто делает другому зло, тот и сам его испытает («увидит»). М.

852. Не говори лишнего с другими; ни родни не забывай, ни жены не забывай; не забывай никого, кроме своей души, а временами и душу свою исправляй.

853. Не говори другому лишнего, достанется и тебе. М.

854. Какою мерою будете мерить другим, такою же будут мерить и вам. М.

855. Чем говорить людям лишние слова, лучше возьми лишний ломоть хлеба. М.

856. Если увидишь утопающего, оттолкни его подальше колом. М.

857. Не работа сушит человека, а горе. М.

858. Чужие дети не то, что свои. М.

859. Чужого не трогай, своего не бросай. М.

860. Кто зарится на чужое, тот потеряет свое. М.

861. Чем видеть то, что у другого, лучше видеть то, что у себя под носом. М.

862. Чем насмехаться над другим, смейся над собой. М.

863. Бери у людей мало, но давай много. М.

864. У другого—что на дереве.

865. Не велено ковырять (загребать) жар для других. М.

866. Для другого (для других) не велено даже купить калача. М.

867. Не рой ямы для другого, сам же попадешь в нее. М.

868. Не о других беспокойся, а беспокойся о себе. М.

869. Не рой глубоко колодец для другого, сам попадешь в него. М.

ЧУВАШ КНИЖНАЯ ПАЛАТА г. Чебоксары Чувашской АССР

870. Çыншĕн кулаҫ ан ил, выҫăхшĕн çăкăр ан кас, теççĕ [1]).

871. Çын пуссине тарăн алтиҫҫĕн, ху пуссуна тарăн алт.

872. Çын куçĕнҫи çӳпе[2]) ан пăх, ху куçăнти пĕренене кăлар, теççĕ.

873. Çын мулне ан хапсăн, ху ĕçлесе туп, теççĕ.

873. Çын мулĕпе ан мухтан.

875. Çын мухтанăшăн ан хĕпĕрте, теççĕ.

876. Çын умне тарăн ан алт, теççĕ.

877. Çын шăтăкне авăтакан, хăйех кĕрсе ӳкет, теççĕ.

878. Çын йалан пуйанпа пурăнмасăр, ăспа та пурăнаҫ, теççĕ.

879. Çын йанти ҫипер пурăнмасан, алăран тухса ӳкет, теççĕ.

880. Çынна хур тăвакан, хăй хура йулнă, теççĕ.

881. Çынна ăсне-халне[3]) пĕлмесĕр ан хурла, теççĕ.

882. Çын аллипе[4]) кăвар пуçтарма лайăх, теççĕ.

883. Çын кăмăлне ытариманăн хăй кăмăлне йăвăр килнĕ.

884. Çын çупмасăр, питçăмарти кăвакармасăр.

885. Çын ăшне тавăрса пăхма кĕрĕк çавни мар.

886. Çын тулашĕнҫен хитре пулин те, унăн ăсне пĕлмесĕр ан мухта, теççĕ.

887. Çын пуссине авăтиҫҫен, ху пуссуна авăт, теççĕ.

888. Çын пуссине тарăн ан алт, теççĕ.

889. Çын сăмахпе çын вилнĕ, теççĕ.

890. Çын аллинҫи курка тутлă теççĕ.

891. Çын йапалине ан хапсăн.

